ЭСИР ПĔЛЕТĔР-И?

# Приматсем



•Çĕр çинчи чи пĕчĕк примат тесе карлик евĕр игрункăна калама йышăннă. Унăн пысăкăшĕ 11-15 сантиметрпа танлашать, 22 сантиметр тăршшĕ хӳрине шута илмесен.

•Упăтесем хăйсене тĕкĕр çинче курсан палласа илеççĕ.

•Пĕррехинче пĕр упăте IQ тестне питĕ лайăх пурнăçланă, вăл вăтам ӳсĕмри американăн ăс-тăнĕпе танлашать.

•Таиландра çулсеренех çак чĕрчунсене апат-çимĕç уявĕ туса параççĕ. Храма икĕ пине яхăн упăтене илĕртеççĕ те вĕсене нумай-нумай улма-çырлапа тата пахчаçимĕçпе хăналаççĕ. Таиландра приматсене мĕншĕн юратаççĕ-ши? Сăлтавĕ питĕ кăсăклă. Çак чĕрчунсен çарĕ Рама турра тăшмана çĕнме пулăшнă иккен.

•Упăтесем нихăçан та шăнса пăсăлмаççĕ.

•Тулаш сăнне пăхсанах унăн кăмăл-туйăмне палăртма пулать: тăрăхласа кулни е çӳлти тутине тăсни – тарăху палли. Пуçне силлени те, хулпуççисене хускатни те çакнах систерет.

•Приматсен аçисем, арçынсем пекех, кукшаланаççĕ. Генетикăпа çыхăннă ку.

•Упăтесен кун-çулĕ вĕсен пысăкăшне кура тĕрлĕрен пулма пултарать: чи пĕчĕккисен – игрункăсен – 10 çултан иртмест, орангутансен вара – 57-60 çул.

•Хăйсен пушă вăхăчĕн ытларах пайне упăтесем пĕр-пĕрин тулаш сăнне тирпейлесе ирттереççĕ.

•Гориллăсем йăвара çывăрма юратаççĕ, уйрăмах амисем. Вĕсем çĕр çинче йывăç тураттисемпе çемçе çулçăсенчен хăйсене валли выртмалли вырăн хатĕрлеççĕ.

•Упăтен юратнă çимĕçĕ банан тени – йăнăш. Вĕсенчен хăшĕ-пĕри çак улма-çырлана тутанса та курман. Приматсен рационĕ тĕрлĕ енлĕ, вĕсем ӳсентăран кăна мар, чĕрчунсене те çиме пултараççĕ.

•Упăтесем ушкăнпа çӳреççĕ, кун пек вĕсене çимелли тупма çăмăлрах.

•Хăш-пĕр тĕсĕн хӳри питĕ хăватлă, вăл кĕлетке йывăрăшне тӳсме пултарать.

•Упăтепе этем пĕр еврĕлĕ пулин те пĕрремĕшне каласма вĕрентеймĕн. Мĕншĕн тесен çак чĕрчунăн пуç миминче пуплев центрĕ çук.

# Мĕншĕн...

## ...эпир Çĕнĕ çула уявлатпăр?



Çĕнĕ çула уявласси – тĕнчери чи авалхи йăла-йĕркесенчен пĕри. Анчах вăл хăçан çуралнине никам та çирĕплетсе калаймасть. Пĕр ăсчах çак уява Китай çыннисем паллă тума пуçланă тет, тепри авалхи германсем тет, хăшĕ-пĕри вара çак йăла-йĕркене римлянсемпе çыхăнтарать.

Китай çыннисен Çĕнĕ çулĕ пирĕннинчен чылай кая юлса çитет. Тата вăл çуркуннене, çĕнĕ пурнăç пуçламăшне, çутçанталăк хĕллехи сивĕсем хыççăн вăй илнине палăртать.

Авалхи германсем Çĕнĕ çул уявне çулталăк вăхăчĕсем улшăннăран паллă тунă. Вĕсен хĕлли чӳк уйăхĕн варринче пуçланнă. Ку вăхăталла пахча çимĕçе, тыр-пула пухса кĕртнĕ, йывăр ĕçсенчен тинех канма пултарнă. Çавăнпа вĕсем пысăк уявсем йĕркеленĕ.

Çĕнĕ çула Европăна римлянсем илсе çитернĕ. Вĕсем пирĕн эрăчченхи 46-мĕш çулхи реформăччен çак уява пуш уйăхĕнче паллă тунă. Ăна тĕрлĕ халăх тĕрлĕ вăхăтра уявлать пулин те тĕп шухăшĕ ĕмĕр-ĕмĕр иртсен те улшăнман. Пур вăхăтра та çынсем Çĕнĕ çул ырă та çутă пурнăç çеç илсе килессе шаннă.

## ...Китай хурлăханĕ киви ятлă?



Киви – Китай çĕршывĕнчи хурлăхан. Ăна ятарласа ӳстерме пĕрремĕш хут Раççей селекционерĕ Мичурин хăтланса пăхнă. Анчах вăл çакна вĕçлесе ĕлкĕреймен. Унăн ĕçне 1945 çулта Çĕнĕ Зеланди ботаникĕсенчен пĕри малалла тăснă. Лайăх климат хуçаланакан çĕрте çитĕнекен çырласем питĕ сĕтеклĕ, пылак тата унчченхипе танлаштарсан пысăкрах пулнă.

Киви – питĕ усăллă çырла. Унра тĕрлĕрен витамин нумай. Вăл Çĕнĕ Зеландири пĕчĕк кайăк – киви-киви – еврĕлĕ курăнать, çавăнпа ăна унăн ятне панă.

## ...кушакăн куçĕсем тĕттĕмре çутатаççĕ?



Паллă ĕнтĕ, кушаксем каçпа кăна «вăранса çитеççĕ», сунара тухаççĕ. Вĕсен куçĕсем тĕттĕмре курма хăнăхнă. Куç çийĕн шал енче çутатакан сий пур – тапетум, вăл тĕкĕр еврĕскер, хăйĕн çине ӳкекен çутта каялла ӳкерет. Каялла ӳкекен çутă каллех фоторецепторсем çине лекет. Кушак куçĕн хыçалти стенкинче ятарлă япала пур, хăйĕн структурипе вăл çутатса якатнă кĕмĕле аса илтерет. Куçа лекекен кашни çутă пайăркине шăпах вăл каялла ӳкерет. Çавăнпа чĕрчунсем тĕттĕмре лайăх кураççĕ, куçĕсем вара вăйсăр çутта та каялла ӳкереççĕ. Анчах сĕм тĕттĕмре кушакăн куçĕ çутатмасть, мĕншĕн тесен каялла ӳкерме нимĕн те çук.

ТĔНЧЕРЕ

# Кĕнеке – пĕлӳ çăлкуçĕ

Хальхи еврĕлĕрех пĕрремĕш кĕнекесене пирĕн эрăри пĕрремĕш ĕмĕрте каларма тытăннă. Вĕсене **йывăçран** хатĕрленĕ. Хăма татăкĕнчен тунă страницăсене ирĕлтернĕ ăвăспа витнĕ, çемçелле якатса ĕлкĕрнĕ. Хытнă ăвăс çине çивĕч металл патакпа çырнă. Темиçе хăма татăкне кантрапа çыхса сыпăнтарнă та кĕнеке пулнă.

Пирĕн эрăчченхи иккĕмĕш ĕмĕрте Пергаме хулинче /Кĕçĕн Ази/ кĕнеке страницисене **пергаментран** /ĕлĕк çырма усă курнă çӳхе сăран/ тунă. Ăна çапларах майпа хатĕрленĕ. Вăкăр е сурăх тирне известь ирĕлчĕкĕнче йĕпетнĕ, унтан типĕтнĕ, хашак çинче тăснă, пемзăпа якатнă та тинех çак тире пылпа сăтăрнă. Пĕр хулăн кĕнекелĕх пергамент хатĕрлеме пĕр кĕтӳ вăкăр кирлĕ пулнă. Унтан куçарса çырса илекенсем тата хуплашкине тăвакансем чылай ĕçленĕ. Хăш чухне пергаментпа тепĕр хутчен те усă курнă. Унчченхи текстне сĕтпе çуса е çĕçĕпе хырса тасатнă. Таса пергамент çине çĕнĕ текст çырнă. Çапла вара авалхи чылай кĕнеке пĕтнĕ.

Йывăçран нумай-нумай текст касса кăлармалли меслет – **ксилографи** – 



Тухăçра çуралнă пуль теççĕ. Корейăра, Китайра, Японире çак меслетпе пирĕн эрăри çиччĕмĕш ĕмĕрте усă курма тытăннă. Вуннăмĕш ĕмĕр вĕçĕнче ксилографи Китайра анлă сарăлнă. Будда тексчĕсене çапла майпа вуншар пин экземплярпа хатĕрленĕ.

Çĕр çинчи **чи авалхи** кĕнеке – Присс папирусĕ. Вăл пирĕн эрăчченхи 3350 çул каяллах пулнă. Чи кăсăкли, çав текстра асăннă тема паянхи кун та çивĕч. Ăна ăрусен хирĕçтăрăвĕ темелле. Кĕнеке авторĕ çамрăксем сăпайсăр, кахал, киревсĕр пулни пирки ӳпкелешет. Куратăр ĕнтĕ, пилĕк пин ытла çул иртсен те нимĕн те улшăнман. Халĕ папирус Парижри Наци библиотекинче упранать.

Авалхи Ассирире **тăм кĕнекесем** кăларнă. Вĕсен страницисем 32х32 форматлă, 2,5 сантиметр хулăнăш пулнă – чăн-чăн яка кирпĕч. Çакнашкал страницăсем кĕнекере вуншар е çĕршер те пулнă.

Тĕнчери **чи йывăр** кĕнеке – Лондонри Британи музейĕнче упранакан географи атласĕ. Унăн çӳллĕшĕ – пĕр метр ытла, йывăрăшĕ – 320 килограмм.

**Чи пĕчĕк** 12 кĕнеке пĕр апат кашăкĕнче вырнаçать.

Вун пиллĕкмĕш ĕмĕр вĕçĕнче Венецири паллă кĕнекеçĕ Альд Мануций **пĕчĕклетнĕ форматлă кĕнекесем** пичетлеме тытăннă. Сăмах май, хӳрелĕ пăнча та вăлах шухăшласа кăларнă. Вун çиччĕмĕш ĕмĕрте Голланди печатникĕсем – пĕртăван Эльзевирсем – тата маларах кайнă. Вĕсем поэзи томĕсене унран та пĕчĕкрех форматпа пичетленĕ.

Кĕнекесенчи **чи анлă сарăлнă сăнар** – Наполеон. Ун çинчен вунă пин тĕрлĕ кĕнеке тухнă. Наполеонпа çыхăннă тепĕр тĕлĕнтермĕш – минутра вăл икĕ пин сăмах вуласа тухма пултарни.

Кĕнеке килĕшнипе килĕшменнине романăн **18-мĕш страницине** çитсен пĕлме пулать. Мĕншĕн тесен вулакансенчен чылайăшĕ шăпах çак страницăра кăсăкланăвне çухатать.

**Библиоклептоман** тесе кĕнеке вăрлакан çынна калаççĕ.

**Хăвăрт** вуланă чухне куç сахалрах ывăнать. Çав вăхăтрах çынсен 95 проценчĕ вăрах вуланине палăртмалла – минутра 200 сăмах е 2 минутра вăтамран 1 страница.

«Пур çĕре те сăмсине чикекен» Гугл тĕнчери пур илемлĕ, публицистика тата наука литературисене шутласа пăхнă. Çĕр çинче **129 миллион та 864 пин те 880 кĕнеке** иккен!

*Страницăна Лариса ПЕТРОВА (56-11-80) хатĕрленĕ.*

# Хаваслă 2015 самант

## «Юр пĕрчисем» сăмахкаçмăшсем

1


2


3


4


### 1-мĕш сăмахкаçмăш

**Сылтăмалла:** 1. Чăваш Енри юханшыв е чăваш журналисчĕ тата писателĕ. 3. ЧР хула. 5. Ĕç хатĕрĕ.

**Аялалла-сылтăмалла:** 1. Чăваш халăх поэчĕ. 2. Урапа-çуна пайĕ. 3. Пушкăрт халăх шăхличĕ.

**Аялалла–сулахаялла:** 1. Кил-çурт çумĕнчи хуралтă. 2. Р.Сарпи хайлавĕ. 4. Халăх ăспурлăхне пухса пыракан, тĕпчекен, малашлăхăн культура, йăла-йĕрке тата ытти те «кĕперне» хывакан учреждени.

### 2-мĕш сăмахкаçмăш

**Сылтăмалла:** 1. Йывăç хуппине сўмелли пĕчĕк калак. 3. ЧР çуралнă контр-адмирал. 5. Елчĕк районĕнчи ял.

**Аялалла-сылтăмалла:**
1. В.Ухли романĕ. 2. Чăвашран тухнă паллă боксер. 3. Ĕлĕкхи /хальхи те/ чăваш тырă, тĕрлĕ ăпăр-тапăр упрама усă курнă хуралтă.

**Аялалла–сулахаялла:** 1. Тайăр Тимкки çуралнă ял. 2. Çар званийĕ. 4. Канаш районĕнчи юханшыв.

### 3-мĕш сăмахкаçмăш

**Сылтăмалла:** 1. «... хĕрĕ» /Ю.Скворцов повеçĕ/. 3. Чĕлхе ăслăлăхĕн пĕр пайĕ. 5. Лена юханшывĕн юппи.

**Аялалла-сылтăмалла:** 1. Чăваш халăх юмахĕ. 2. Чăвашсен паллă дирижерĕн Яклашкинăн ячĕ. 3. К.Ивановăн «Нарспи» поэмин кĕнекине ўкерчĕксемпе илемлетнĕ чăваш ўнерçи.

**Аялалла-сулахаялла:** 1. Çурхи тавралăх тĕсĕ. 2. Чăвашсен паллă скульпторĕ. 4. Чăваш писателĕ, «Летчиксем» роман авторĕ.

### 4-мĕш сăмахкаçмăш

**Сылтăмалла:** 1. Вăрман е çаран çимĕçĕ. 3. Чăвашран тухнă тĕнчипе паллă медицина тухтăрĕ, Европăри акушерсемпе гинекологсен пĕрлĕхĕн членĕ. А.Пишингер премипе медальне тивĕçнĕ чăваш хĕрарăм врачĕ. 5. Концерт, спектакль пуласси пирки çырса çапнă пĕлтерўÿ.

**Аялалла-сылтăмалла:** 1. Тригонометри функцийĕ. 2. Чечек. 3. Пулă тытмалли хатĕр.

**Аялалла-сулахаялла:** 1. Пысăк мар литература хайлавĕ. 2. Кĕре кĕрсен тутланса çитекен панулми. 4. Тĕнчери шыв-шур, хула, ту-сăрт тата ытти пирки хатĕрленĕ справочник.

5


6


7


### 7-мĕш сăмахкаçмăш

**Сылтăмалла:** 1. Юханшывран пулакан пысăк шыв лаптăкĕ. 3. Кашни районтах тенĕ пек çак ятлă ял пур. 5. Л.Агаковăн «Салтак ачисем» повеçри сăнар.

**Аялалла-сылтăмалла:** 1. Чăваш апат-çимĕçĕ. 2. Выльăх апачĕ. 3. Пулă тытмалли хатĕр.

**Аялалла-сулахаялла:** 1. Çўллĕ юпана çирĕплетме юнашар çыхса лартнă тепĕр кĕскерех юпа. 2. Чăвашран тухнă хĕрарăм-ухăçă, тĕнчери тĕрлĕ ăмăртури çĕнтерўçĕ, паллă тренер. 4. Выльăхсене апат памалли хатĕр.

### 5-мĕш сăмахкаçмăш

**Сылтăмалла:** 1. Хальхи чăваш писателĕ тата журналисчĕ. 3. Уйхир культурисемшĕн усăллă хурткăпшанкă. 5. Л.Агаковăн «Салтак ачисем» повеçри сăнар.

**Аялалла-сылтăмалла:** 1. Çын тыткаларăш палли. 2. Ут тăврашĕ. 3. Я.Ухсай кĕнеки.

**Аялалла-сулахаялла:** 1. Ĕлĕкхи çĕр хуçи, çĕрме пуян. 2. Чăвашран тухнă, хăвăрт утас енĕпе тĕнчипе палăрнă спортсменка, Олимп чемпионки. 4. Чăваш поэчĕ, журналисчĕ, «Атнер» поэма авторĕ.

### 6-мĕш сăмахкаçмăш

**Сылтăмалла:** 1. Ĕç укçи е турăша, е хаклă кĕнекене ылтăнкĕмĕлтен хатĕрлесе витнĕ çўхе сий, илем. 3. Чăваш халăх писателĕ, драматург. 5. Н.Теветкел çырнă поэма.

**Аялалла-сылтăмалла:** 1. Шупашкарти кўлмек /залив/ хĕрринчи «Амăшĕ» палăкăн авторĕсенчен пĕри. 2. Паллă театр тата киноактерĕ, çак хушаматпа М.Кутузов ординарецĕ пулса хĕр те çўренĕ, циркра клоун дрессировщикĕсем вуншарăн ĕçленĕ тата ытти паллă çынсем чылай тăрăшаççĕ. 3. А.Николаев умĕн тĕнче уçлăхне вĕçсе хăпарнă космонавт.

**Аялалла-сулахаялла:** 1. Юрăçсен сакăр çынран тăракан ушкăнĕ. 2. Тутарстанри Çĕпрел районĕнчи Упи ялĕнче çуралнă, СССР авиаци промышленнoçĕн министрĕ пулса чылай çул ĕçленĕ, «Элара» пĕрлешĕве хута яма чылай тăрăшнă чăваш. 4. В.Краснов-Асли «Вутра» романри сăнар.

## Ребус

Чăраш çине тăвата ребус вырнаçтарнă. Вĕсенче – елка çине çакмалли, вырнаçтармалли, илемлетмелли япаласен ячĕсем.



## Ребус

Çакăнта ваттисен сăмахĕ пытаннă.



*Юрий ФРОЛОВ (Шупашкар) хатĕрленĕ.*

ЫЙТĂМ

## Мĕн-ши вăл юрату?



Манăн шухăшпа, юрату вăл – пĕр-пĕрне хисеплени, юратни, йывăр вăхăтсенче пулăшни, ăнланни. Кирек мĕн тусан та хăвăн йăнăшна йышăнма пĕлмелле. Юратура чăнлăх, шанчăклăх пĕлтерĕшлĕрех. Пĕрре «Юрататăп», – терĕн пулсан хăвăн сăмахна тытма пĕлмелле. Пуçунта çил ан вылятăр, сăмахху çирĕп пултăр. Вăл сана çиллентерчĕ пулсан ун умĕнче тӳрех алăк хупмалла мар, çынна каçарма пĕлмелле. Йăнăшсси такамăн та пулать.

Юратура тепĕр ен те пур. Вăл – кĕвĕçӳ. Кĕвĕçмелле мар теместĕп, ку кирлĕ те пуль. Анчах çакна асра тытмалла: санăн çынну санпа пĕрлех пулĕ, ниçта та каймĕ.

Арçын ачапа хĕрача хушшинче туслăх пур-ши? Пур тесе шухăшлатăп эпĕ. Анчах питĕ сайра. Хĕрачапа арçын ача хушшинче туслăх пулаймасть пек туйăнать. Чăнах та, пĕриншĕн ку туслăх кăна пулĕ, тепришĕн вара – ытларах. Иккĕмĕшĕ хуравсăр юратупа асапланма пуçлать.

«Юратушăн иккĕн кĕрешмелле», «Юратăва упрама пĕлмелле», «Юрату чуна çĕклентерет, çамрăклатать» каларăшсене нихăçан та манмалла мар.

Хуравсăр юрату та пулма пултарать. Пĕрин туйăмĕсем хĕрӳ, теприне вара çакă кирлĕ те мар. Çак самантра çамрăксем питĕ кулянаççĕ, вĕсене кичем пулать. Анчах кайран юратаканни хăйĕн туйăмне йышăнманни çине пăхма пăрахать те… Вара иккĕмĕшĕ тинех юратма тытăнать. Çакă чуна питĕ ыраттарать. Çавăн пек чухне туйăмсемпе асапланакана итлеме, йăпатма пĕлмелле. Хĕрачасем мана кунашкал пулăмсем çинчен час-часах каласа параççĕ, анчах эпĕ кун пирки сӳпĕлтетсе çӳреместĕп, ăнланма тата пулăшма çеç тăрăшатăп.

*Наташа МИХАЙЛОВА.*

Хĕрлĕ Чутай районĕ,
Çĕнĕ Атикасси шкулĕ.

ПОЭЗИ ЫТАМĔНЧЕ

### Саватăп сана

Ман чĕрем хумхатса чунăма
Кăлт та кăлт туса хыттăн тапать.
Чĕртме пĕлмĕ хĕрӳ туйăма,
Пирĕн туслăх мĕнле хак парать?

Сăнчăрларăн эс ман чунăма,
Сан патнах кунсерен вăл туртать.
Юрататăн пулсассăн кала,
Таса туйăм йӳне-ши ларать?

Читлĕхе хупас çук чĕрене,
Ун çăрин те уççи пулас çук.
Çак таса юрату илемне
Парнелетĕп хĕвел аннă чух.

Сăнчăрлатăп эп хам кăмăла:
Пытармастăп, саватăп сана.
Каçĕ хӳхĕм-çке çакă çулла…
Парнеле-ха чунна эс мана.

*Кристина ПОРФИРЬЕВА,*
*ЧППУ студентки.*

### Эсĕ пурччĕ...

Асăмра сассу янрать сан
Темшĕн кашни кун.
Чунăма хуçса пăрахрăн
Эсĕ пĕр сив кун.
Юрату кăварĕ сӳнчĕ,
Шанчĕ ĕненӳ.
Эс кăна-çке маншăн пурччĕ,
Юлчĕ хĕрхенӳ.
Савнă сăнăма шыратăп
Эп кашни çынра.
Тăрăшсан та манаймастăп
Савăк вăхăта.
Каçсерен сана чĕнетĕп:
Кил ман патăма.
Тĕлĕкре те пулин, тетĕп,
Ăшăт чунăма.

*Мария АЛЕКСАНДРОВА,*
*ЧППУ студентки.*

ШĂПА

## Тĕлпулу



Ĕнер анчах урамра пылчăкчĕ. Паян вара… Тахçантанпах кĕтнĕ юр каçхине таврана шуратнă. Йывăççем, тĕмĕсем – пурте шурă пĕркенчĕк айĕнче.

Люда савăнăçне ниçта чикеймерĕ. Унăн пурне те ыталаса чуптăвас, ырă сунас килчĕ. «Мĕншĕн савăнатăн?» – тесе ыйтсан хĕр нимĕн те каламĕ, савăнăçлăн ахăлтатĕ çеç. Нимĕн те, нимĕн те унăн кăмăлне хуçаймĕ.

Мĕншĕн Людăн паян кăмăл-туйăм савăк-ши? Таврари илемлĕх ăна çапла савăнтарать-ши? Çапла, çакă та. Людăн чи юратнă çулталăк вăхăчĕ вăл – хĕлле. Юр пĕрчисем ерипен-ерипен ӳкни, каçсерен тавралăх йăлтăртатни питĕ килĕшет ăна. Анчах ку кăна та мар. Тен, паян пулса иртнĕ ĕç пуçран каймасть?

Шкултан тухсан Люда килнелле пĕчченех утрĕ. Хирĕç пĕр каччă килет. Хĕрачапа танлашсан вăл кулса илчĕ. «Мĕн кулатăр вара?» – ыйтрĕ пике. «Сирĕн куç харшисем çинче юр пĕрчисем выртаççĕ. Эсир кун пек темĕнле пирĕшти пекех», – терĕ йĕкĕт.

Çакна илтсен Люда та кулса ячĕ. Вĕсем темччен çапла пуплесе тăчĕç. Мĕн çинчен калаçнине те астумасть хĕр. Хăйсем çинчен нимĕн те каламасăрах уйрăлчĕç. Ячĕсене те пĕлмеççĕ-çке. Анчах çак ниме тăман тĕлпулу та Людăн савăк кăмăлĕн пĕр саманчĕ пулчĕ.

*Нина ОСИПОВА.*

Тутарстан,
Чистай районĕ,
Анат Кăтрата.

ÇИВĔЧ ЫЙТУ

## Хĕрсем, ан мĕскĕнленĕр!



Мана «Çунатлă çамрăклăх» рубрика питĕ килĕшет. Унта ытларах хĕрсен çырăвĕсем пичетленеççĕ. Каччăсем вара? Эсир ăçта, каччăсем? Мĕншĕн-ха хĕрсем кăна: «Эпĕ ăна юрататăп, унсăрăн пурăнаймастăп», – тесе çыраççĕ. Каччăсем вара – ниме тăман каччăсем. Хĕрсем, мĕншĕн эсир вĕсен умĕнче çав териех мĕскĕнленетĕр? Хĕрсем! Пăрахăр, тархасшăн, мĕскĕнленме! Ан ĕненĕр вĕсен ултавлă сăмахĕсене.

Эпĕ те мĕскĕнлентĕм çав пĕр каччă умĕнче. Мана клубран ăсатас килнĕ чухне ăсататчĕ вăл, ăсатас килмен чухне вара эпĕ пĕчченех киле утаттăм. Тăватă çул хушшинче çапла пăтранса пурăнтăмăр. Ман умран ытти хĕрпе те иртсе каятчĕ вăл, йăмăкпа та… Пурне те, пурне те каçарнă эпĕ. «Пăрах ăна, урăххисем те юратаççĕ вĕт сана. Мĕн асапланса пурăнатăн унпа?» – тетчĕç хĕрсем мана. Çук, пăрахман, урăххисем çине пăхма та хăйман. Халĕ кăна тăн кĕчĕ. Мĕншĕнха эпĕ ун умĕнче мĕскĕнлентĕм? Урăххисем çук-и? Пур. Лайăхраххисем те.

Халĕ эпĕ урăх каччăпа калаçатăп. Вăл мана хăй юратнине темиçе хутчен те пĕлтерчĕ ĕнтĕ. Анчах эпĕ унăн сăмахĕсене ĕненместĕп. Малтанхи савни темиçе хут та каçару ыйтрĕ, пĕлет вăл манăн урăххи пуррине, анчах эпĕ ăна нихăçан та каçармăп. Нихăçан та.

Хĕрсем! Тархаслатăп сире, ан мĕскĕнленĕр. Ан ĕненĕр каччăсене. Хальхи вăхăтра таса чун-чĕреллĕ каччă питĕ сайра.

*ИЛЕМПИ.*

Шупашкар.

ĂСЛĂ КАЛАНĂ

## Эх, çамрăклăх!..



Çамрăк çын ăвăс пек.
*/Д.И.Фонвизин/*

Çамрăклăх – чи чаплă ăрăмçă.
*/А.С.Пушкин/*

Çамрăк чухне аслисене пăхăн. */Менандр/*

Çамрăксем лĕпĕш пекех: çутталла вĕçеççĕ те çулăма лекеççĕ.
*/В.Ключевский/*

Çамрăксем çапла каланине час-часах илтме пулать: манăн çын ăсĕпе пурăнас килмест, хамăн шухăшласа илес килет. Унччченех шухăшласа илнине санăн мĕн тума тепре шухăшламалла-ха? Хатĕррине ил те малалла пурăн. Этемлĕх вăйĕ çакăнта.
*/Л.Н.Толстой/*

Çамрăклăх – харсăрлăх вăхăчĕ.
*/Стендаль/*

*Страницăна Лариса ПЕТРОВА (56-11-80) хатĕрленĕ.*




### Январь / Кăрлач

| | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|
| тн. | | 4 | 11 | 18 | 25 |
| ыт. | | 5 | 12 | 19 | 26 |
| юн. | | 6 | 13 | 20 | 27 |
| кç. | | 7 | 14 | 21 | 28 |
| эр. | 1 | 8 | 15 | 22 | 29 |
| шм. | 2 | 9 | 16 | 23 | 30 |
| вр. | 3 | 10 | 17 | 24 | 31 |

### Февраль / Нарăс

| | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|
| тн. | 1 | 8 | 15 | 22 | 29 |
| ыт. | 2 | 9 | 16 | 23 | |
| юн. | 3 | 10 | 17 | 24 | |
| кç. | 4 | 11 | 18 | 25 | |
| эр. | 5 | 12 | 19 | 26 | |
| шм. | 6 | 13 | 20 | 27 | |
| вр. | 7 | 14 | 21 | 28 | |

### Март / Пуш

| | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|
| тн. | | 7 | 14 | 21 | 28 |
| ыт. | 1 | 8 | 15 | 22 | 29 |
| юн. | 2 | 9 | 16 | 23 | 30 |
| кç. | 3 | 10 | 17 | 24 | 31 |
| эр. | 4 | 11 | 18 | 25 | |
| шм. | 5 | 12 | 19 | 26 | |
| вр. | 6 | 13 | 20 | 27 | |

### Апрель / Ака

| | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|
| тн. | | 4 | 11 | 18 | 25 |
| ыт. | | 5 | 12 | 19 | 26 |
| юн. | | 6 | 13 | 20 | 27 |
| кç. | | 7 | 14 | 21 | 28 |
| эр. | 1 | 8 | 15 | 22 | 29 |
| шм. | 2 | 9 | 16 | 23 | 30 |
| вр. | 3 | 10 | 17 | 24 | |

### Май / Çу

| | | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|
| тн. | | 2 | 9 | 16 | 23 | 30 |
| ыт. | | 3 | 10 | 17 | 24 | 31 |
| юн. | | 4 | 11 | 18 | 25 | |
| кç. | | 5 | 12 | 19 | 26 | |
| эр. | | 6 | 13 | 20 | 27 | |
| шм. | | 7 | 14 | 21 | 28 | |
| вр. | 1 | 8 | 15 | 22 | 29 | |

### Июнь / Çĕртме

| | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|
| тн. | | 6 | 13 | 20 | 27 |
| ыт. | | 7 | 14 | 21 | 28 |
| юн. | 1 | 8 | 15 | 22 | 29 |
| кç. | 2 | 9 | 16 | 23 | 30 |
| эр. | 3 | 10 | 17 | 24 | |
| шм. | 4 | 11 | 18 | 25 | |
| вр. | 5 | 12 | 19 | 26 | |

### Июль / Утă

| | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|
| тн. | | 4 | 11 | 18 | 25 |
| ыт. | | 5 | 12 | 19 | 26 |
| юн. | | 6 | 13 | 20 | 27 |
| кç. | | 7 | 14 | 21 | 28 |
| эр. | 1 | 8 | 15 | 22 | 29 |
| шм. | 2 | 9 | 16 | 23 | 30 |
| вр. | 3 | 10 | 17 | 24 | 31 |

### Август / Çурла

| | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|
| тн. | 1 | 8 | 15 | 22 | 29 |
| ыт. | 2 | 9 | 16 | 23 | 30 |
| юн. | 3 | 10 | 17 | 24 | 31 |
| кç. | 4 | 11 | 18 | 25 | |
| эр. | 5 | 12 | 19 | 26 | |
| шм. | 6 | 13 | 20 | 27 | |
| вр. | 7 | 14 | 21 | 28 | |

### Сентябрь / Авăн

| | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|
| тн. | | 5 | 12 | 19 | 26 |
| ыт. | | 6 | 13 | 20 | 27 |
| юн. | | 7 | 14 | 21 | 28 |
| кç. | 1 | 8 | 15 | 22 | 29 |
| эр. | 2 | 9 | 16 | 23 | 30 |
| шм. | 3 | 10 | 17 | 24 | |
| вр. | 4 | 11 | 18 | 25 | |

### Октябрь / Юпа

| | | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|
| тн. | | 3 | 10 | 17 | 24 | 31 |
| ыт. | | 4 | 11 | 18 | 25 | |
| юн. | | 5 | 12 | 19 | 26 | |
| кç. | | 6 | 13 | 20 | 27 | |
| эр. | | 7 | 14 | 21 | 28 | |
| шм. | 1 | 8 | 15 | 22 | 29 | |
| вр. | 2 | 9 | 16 | 23 | 30 | |

### Ноябрь / Чӳк

| | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|
| тн. | | 7 | 14 | 21 | 28 |
| ыт. | 1 | 8 | 15 | 22 | 29 |
| юн. | 2 | 9 | 16 | 23 | 30 |
| кç. | 3 | 10 | 17 | 24 | |
| эр. | 4 | 11 | 18 | 25 | |
| шм. | 5 | 12 | 19 | 26 | |
| вр. | 6 | 13 | 20 | 27 | |

### Декабрь / Раштав

| | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|
| тн. | | 5 | 12 | 19 | 26 |
| ыт. | | 6 | 13 | 20 | 27 |
| юн. | | 7 | 14 | 21 | 28 |
| кç. | 1 | 8 | 15 | 22 | 29 |
| эр. | 2 | 9 | 16 | 23 | 30 |
| шм. | 3 | 10 | 17 | 24 | 31 |
| вр. | 4 | 11 | 18 | 25 | |